Истори страницинчен

Кил ăшшине тупрĕç

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрти ватăсемпе инвалидсен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмĕ ĕçлеме пуçланăранпа 15 çул ситрĕ. Икĕ çул каялла улăштарчĕ вăл хăйĕн ятне: малтан ваттисен çурчĕ пулнă.

Чи малтан çак çуртра Мăн Сĕнтĕрти земство шкулĕ ĕçленĕ. Кайран çĕнĕ шкул хута кайнипе çурт пушаннă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче республикăра ваттисен çурчĕсене уçас ĕç вăй илнĕ. Çавăнпа пĕрлех тата Мăн Сĕнтĕрте пĕччен пурăнма йывăртарах ватăсем сахал мар пулни те ваттисен çуртне тумалли çине витĕм кӳнĕ. Çапла вара пурнăç ыйтнипе тата вăл вăхăтра район администрацийĕн социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи пулнă Е.П. Иванова çине тăнипе çак çурта йĕркелесе ярассипе пĕрремĕш утăмсем тунă. Çуртăн никĕсĕ çирĕппи тата çурчĕ хăй те япăхса кайманни малтанах палăрнă, тĕрĕслевсем хыççăн вара урай хăмисене, çуртăн çивиттине юсаса çĕнетнĕ. Пӳлĕмсем те йĕркеленĕ. Йывăç çурта тул енчен кирпĕчпе купаласа хăпартнă. Асăннă ĕçсемпе пĕрлех канализаци тата шыв пăрăхĕсене те хурса хăварнă. Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче шăпах çут çанталăк газне кĕртес тапхăр пулни вара ваттисен çуртне те çак ырлăха çитерме май панă.

Паллах, пулăшакансем те нумай пулнă, анчах Екатерина Павловна спонсорсене яланах шыранă. Ун чухне Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Михайлович Рубцов та пархатарлă ĕçĕн пуçаруçисене айккинче хăварман. Çапла вара тытăннă ĕçе вăраха ямасăр 1993 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр салинче ваттисен çуртне уçнă. Тӳрех çав вăхăтра унта 7 ватă хӳтлĕх тупнă. Вĕсене ăшă кăмăлпа Алевтина Лаптева тата Зоя Голышникова пăхса тăнă. Йывăр вăхăтсем пулнă ун чух: пенси укçисене вăхăтра паман, çынсем уйăхĕ-уйăхĕпех ĕç укçи мĕнне мансах ĕçленĕ... Çак ватăсене пăхакансем те хăйне май йывăр лару-тăруран тухассипе кашни кун тимленĕ. Нумай чухне килĕсенчен çăкăр пĕçерсе килсе ватăсене çитернĕ... Малаллахи çулсенче ваттисен çурчĕ яланах тулли пулнă – 15 çын пурăннă унта.

Паянхи куна кунта ветерансемпе инвалидсем пурĕ 14-ăн пурăнаççĕ. Кил ăшшине те, «тăванĕсене» те кунтах тупнă вĕсем. Пĕр пысăк çемье тейĕн... Кунран-кун вĕсене тимлĕх уйăрса Людмила Геннадьевна Каргина, Елена Назаровна Грачева тата Елена Егоровна Терентьева тăрăшаççĕ. Людмила Геннадьевна çак ĕçре 12 çул ытла ĕнтĕ, 6 çулне ватăсен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмăн ертӳçинче вăй хурать. Каласа хăвармалла, вăл республика шайĕнче иртекен «Чи лайăх социаллă ĕçчен» конкурса та тăтăшах хутшăнать. Хăйĕн ĕçри пултарулăхĕпе палăрать. Пĕлтĕр те акă «Ăрусен калаçăвĕ» проекта çырса республикăри конкурса хутшăнчĕ. 26 ĕçрен жюри 8 ĕçе лайăхпа палăртнă. Унта пирĕн ĕçтешĕн ĕçĕ тăваттăмĕш вырăна тивĕçнĕ. Социаллă ĕçченсем çулсерен хăйсен ăсталăхне ӳстерсех пыраççĕ, ватăсене вара хăйсен мĕн пур чун ăшшине парнелеççĕ.

Пурне те пĕр пек тимлĕх уйăраççĕ кунта. Кашнин проблемине ăнланаççĕ социаллă ĕçченсем. Çурта тирпей-илемре тытаççĕ, ватăсене апат-çимĕç пĕçерсе çитереççĕ, кĕписене çуса тăхăнтартаççĕ, мунчине те вĕсемех кĕртеççĕ. Ватă çын тенин тата больницăна та час-часах çитме тивет. Çакăн чухне те социаллă ĕçченсем вĕсемпе пĕрлех çула тухаççĕ. Апатланма кунне 4 хутчен апатланаççĕ кунта пурăнакансем. Пахча çимĕçсене хатĕрлес ĕçе вара ваттисен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмăн ĕçченĕсемпе пĕрле районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тата районти социаллă пулăшу паракан центрăн специалисчĕсем те кашни çулах хутшăнаççĕ: çуркунне аксалартнинчен пуçласа кĕркунне тухăça пуçтарса кĕртиччěнех.

Ватăсем те ахаль лармаççĕ. Çăм арлакан та, алсачăлха çыхакан та пур кунта. Сăмахран, Дарья Михайловна Сибагатова çак ĕçсене тума питĕ кăмăллать, Валентина Григорьевна Кольцова вара çемçе теттесем çĕлет. Республикăра иртнĕ инвалидсен «Преодоление» конкурсĕнче те вăл хăйĕн ĕçĕсемпе малтисен шутне кĕрсе диплома тивĕçрĕ. Ахаль те кунти ватăсем питĕ ырă кăмăллă, пĕр-пĕрне хисеплеççĕ, юратаççĕ те. Çак çуртрах ватлăхра пĕр-пĕрне «тупнисем» те пур. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннине вара чăнах та нимĕн те çитмест.

Ватăсем патне шкул ачисем час-часах килсе çӳреççĕ, ватăсем хăйсем те кашни уявах пĕрле ирттереççĕ. Уявсене ирттерме тата куллен-хи пурнăçра вĕсене пулăшакансем те çук мар. Паян пире ваттисемпе ĕçлеме ăнланса пулăшса пыракан район администрацийĕн пуçлăхне Юрий Александрович Иванова тата мĕн пур пулăшакансене тав сăмахĕ калатпăр. Тĕслĕхрен, «Заря» пĕрлешӳ ертӳçине П.Т. Терентьева, «Мăн Сĕнтĕрти çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх» предприяти директорне Ю.Л. Петрова, Мăн Сĕнтĕр райповĕн тата Мăн Сĕнтĕрти çăкăр завочĕн ертӳçисене Л.П. Майковапа Л.Г. Ильгечкина тăтăшах пулăшса пынăшăн ятранах асăнса хăвармалла. Пулăшу кӳрекен ытти предпринимательсем те ырă сăмаха тивĕç. Вĕсем пулăшнипе ĕнтĕ тĕрлĕ юсав ĕçĕсене туса пыратпăр. Ватăсене канма беседка та «тупăнчĕ». Анчах вĕсене уçăлса çӳремелли вырăн питĕ сахал. Шел пулин те, çак ыйту паян кун йĕркинчен каймасть. Çурт-йĕр тавра лаптăк пĕчĕк пулни те пăшăрхантарать. Пахча е сад тума майсем çук. Пахча çимĕç йăранĕсем патĕнче пулсан питĕлайăх пулмалла. Ватăсен пурнăç условийĕсене вара лайăхрах туса парас килет.

О. ИВАНОВА, Муркашри социаллă хӳтлĕх паракан центр ертӳçи.

Пенси ыйтăвĕсемпе

«Пенси валли укçа-тенкĕ епле майпа пухмалла?»

Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей гражданĕсен ĕç пенсийĕн хушăнса пыракан пайĕ çине хушма страховани взносĕсем хывнипе пулас пенси виçине палăрмаллах ӳстерме май пулса тăчĕ. Çакна патшалăх та хăй енчен укçа-тенкĕ уйăрса пулăшать, налук тӳлес енĕпе те çăмăллăхсем пур.

2008 çулхи октябрь уйăхĕнче Чăваш Республикинче «Пенси валли укçа-тенкĕ епле майпа пухмалла?» ятпа информаци марафонĕ иртет. Унăн тĕллевĕ – республикăра пурăнакансене пулас пенсие йĕркелеме хăйсене хутшăнтарасси. Çавна май ку ыйтусемпе РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ĕçченĕсем ĕç коллективĕсемпе, ял çыннисемпе тĕл пулаççĕ, уçă алăксен кунĕсене ирттереççĕ. Консультаци пункчĕсенче тĕл пулусене çак графикпа ирттерме пăхнă:

Хăш кун	Вăхăт	Консультаци пункчĕ
13.10.2008	10.00–12.00	Ильинка ял тăрăхĕ
13.10.2008	13.00–15.00	Вăрманкасси ялĕнчи библиотека (Ильинка ял тăрăхĕ)
13.10.2008	10.00–12.00	Катькас ял тăрăхĕ
13.10.2008	10.00–12.00	Уйкас Янасал ял тăрăхĕ
13.10.2008	10.00–12.00	Районти социаллă хӳтлĕх пайĕ
13.10.2008	10.00–12.00	Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ
13.10.2008	13.00–15.00	Мăн Хураçка ялĕнчи библиотека (Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ)
13.10.2008	10.00–12.00	Районти тĕп библиотека

Кун пек тĕл пулу Юнкă ял тăрăхĕнче 2008 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче иртрĕ. Уçă алăксен кунĕ вара Пенси фончĕн районти управленийĕнче 2008 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕнче пулать. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Октябре 50 çул урам, 23 «а» çурт. Пурне те уçă алăксен кунне активлă хутшăнма чĕнетпĕр.

Е. АЛЕКСАНДРОВА, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.

Спорт

Б.И. Павлова асăнса

Тивĕш шкулĕнче 2008 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче кунта футбол команди йĕркеленĕренпе 90 çул çитнине халалласа тата мини-футбола анлăрах сарас, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас тĕллевпе Б.И. Павлова асăнса мини-футбол енĕпе уçă турнир ирттерме палăртнă. Ăмăрту 9 сехетре пуçланать.

Ăмăртăва ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисен тата учрежденисен 35 çултан аслăрах участникĕсем хутшăнма пултараççĕ. Командăра 9 участник тата 1 представитель пулмалла.

Ăмăртăва ирттерме каякан тăкаксене В.И. Павлов, спонсорсем тата Шетмĕпуç ял тăрăхĕ саплаштараççĕ. Командăсене вырăна çитерессипе вырăнти организацисем ответлă пулса тăраççĕ.

Призлă вырăн йышăннă командăсене дипломсемпе парнесем параççĕ.

Ăмăрту кунĕнче командăсен представителĕсем судьясен коллегине организацисен ертӳçисемпе врач алă пуснă ятран паракан заявкăсене тăратаççĕ.

Çавна та палăртса хăварасшăн. Участниксен çумра паспортсем пулмалла.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства,без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070504:56, местоположение: участок находится примерно в 275 м по направлению на юг от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Шомиково, д. 1, площадью 5765 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства,без права строительства на нем, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070701:107, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Чурикасы, участок расположен в западной части квартала 21:17:070701, площадью 6296 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:180501:57, местоположение: участок находится примерно в 240 м по направлению на юго-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Вурмой, ул. Лесная, д. 3, площадью 6000 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Виссĕмĕш пăруламалли хĕрлĕпе шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-994-37-36.

Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр туянатпăр. Тел.: 68-5-89, 8-909-304-08-81. 2-5.

Индивидуальному предпринимателю Вязову Андрею Николаевичу требуется маляр мебельного производства. Зарплата высокая. Звонить по тел.: 2-25-74 с 8.00 до 17.00.

Хушма хуçалăхран 7 уйăхри тиха сутатпăр. Тел.: 8-919-650-13-23. 2-4.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-5.

В кафе ООО «Заря» (д. Москакасы) требуется повар. Тел.: 8-903-066-20-73.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер.
Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 4-5.

Загружаю, перевезу, разгружаю. Кран - 2,8 т., борт – 5 т. Продаю: кирпич любой, блоки, пеноблоки, кольца колодезные, шифер, цемент. Тел.: 8-903-357-46-75. 6-7.

М С Ц
МЕЖОТРАСЛЕВОЙ СТРАХОВОЙ ЦЕНТР

ОАО «МЕЖОТРАСЛЕВОЙ СТРАХОВОЙ ЦЕНТР» в г.Чебоксары приглашает на работу страховых агентов. Оплата достойная. Опыт приветствуется.
ТЕЛЕФОНЫ: (8352) 63-62-42 , 8-906-381-65-60
Лиц. ФССН С № 0088 77 от 01.03.2006 г. 1-8.

ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:
- упитанных быков, телок, коров, свиней в живом виде, свинину.
Тел.: 60-6-62, 8-960-305-15-97, 8-937-377-54-94. Герман.

Продаю: сепаратор молочный, электропрялку, электроинкубатор, электромаслобойку. Тел.: 8-905-343-06-50.

Куплю корову бычка, телку. Тел.: 8-905-342-39-43. 1-2.

Продается дом с надворными постройками, сад, баня в с. Б. Сундырь Моргаушского района, участок 15 сот. Тел.: 52-4-07.

Продаю блоки керамзитобетонные, щебень, щебень кирпичный, гравмассу, песок речной.Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Продаем ячмень, пшеницу. Требуется водитель на автомашину КамАЗ-цементовоз. Тел.: 8-903-379-16-62, 8-919-666-55-77 (плодокомбинат). 1-3.

Аттестат Б 235367 о среднем образовании, выданный на имя Савельевой Светланы Алексеевны Сятракасинской СОШ Моргаушского района, считать недействительным.

Администрация Моргаушского района, отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района и Совет Моргаушской районной организации профсоюза работников народного образования выражают глубокое соболезнование Моисееву В.Т., учителю физической культуры МОУ «Калайкасинская средняя общеобразовательная школа», по поводу безвременной кончины

МАТЕРИ.

Очăкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ çак шкулта ĕçленĕ

Мария Васильевна ТИХОНОВА

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ООО «Моргауши-Хлеб» коллективĕ пекарь пулса ĕçлекен Л.З. Аркадьеван

АШШĔ

вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ кунта васкавлă пулăшу уйрăмĕнче ĕçлекен водителĕн В.Г. Самушкинăн амăшĕ

Зинаида Никитична САМУШКИНА

нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе тарăннăн хурланса пĕлтерет.

Чуманкасси ялĕнче çуралнă

Зинон Емельянович ЕМЕЛЬЯНОВ

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен çывăх тăванĕсем пĕлтереççĕ.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Гл. редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 10.10.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3594.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.